Сăмах – сывлăх хуралçине

Вакцинăпа – чире хирĕç

В гепатитпа, грипа хирĕç, хĕрлĕ шатра ересрен, полиомиелит чирне сирес тĕллевпе вакцинăсем тăваççĕ. Ăна камсене тума палăртнă-ха? Çакăн пирки калса пама ыйтрăм эпĕ роайонти тĕп больницăн врач-инфекционистĕнчен Г.Г. ФЕДОТОВАРАН.

– Галина Гурьевна, ку вакцинăсене хăш çулхисене тăваççĕ?

– “Сывлăх” наци проекчĕ самай ырă витĕм кÿрет. Çавна май 2006-2007 çулсенче 17 çула çитмен пур ачана та тата 18 çултан пуçласа 35 çулчченхисене В гепатит вирусĕ ересрен иммунизаци тума палăртнă. 5 çултан аслăрах тата 18 çултан пуçласа 35 çулченхи хĕр-хĕрарăмсене хĕрлĕ шатра ересрен, енчен те вĕсене маларах туман тата чирлемен пулсан, тăватпăр. Çавăн пекех полиомиелита хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе вакцина тума палăртнă.

Çак ĕçсене туса ирттерме районта 13 ушкăн йĕркеленĕ. Палăртнă ĕçе вĕсем туллин, кирлĕ пек пурнăçласа пыраççĕ.

2006 çулта хĕрлĕ шатра чирне хирĕç кĕрешме 51 пин те 300 тенкĕлĕх 1603 доза кÿрсе килнĕ. В гепатит чирĕнчен 16 пин те 584 доза 768 пин те 613 тенкĕлĕх илсе килнĕ. Гриппран 8300 доза 372 пин тенкĕлĕх, полиомиелитран профилактика тума 16 пин те 133 тенкĕлĕх 60 доза илсе çитернĕ.

– Пурнăçланă ĕçĕн калăпăшĕ еплерех?

– Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне В гепатитран 5528 ачапа çул çитмен çамрăка тунă е 100 процентпа, иккĕмĕшне те 100 процентпа е 5528 ачапа çул çитмен çамрăка, виççĕмĕшне 96,2 процент е 5319 çынна тунă. Хĕрлĕ шатра чирĕнчен 1603 ачана прививка тунă е 100 процент. Гриппран шкул çулне çитмен учрежденисенчи 1200 ачана е 100 процент, 1-4 классенчи 1640 ачана е 100 процент, медицина ĕçченĕсене, 60 çултан аслăраххисене 96,7 процент, вĕрентÿ учрежденийĕсенче вăй хуракансене 98,8 процент тума ĕлкĕрнĕ.

– Çак ĕçĕн витĕмĕ сисĕнет-и?

– Çапла, эпир ăна самай туятпăр. Чăваш Республикипе илес пулсан, В гепатит вирусĕпе сиенленесси 2006 çулта, 2005 çулхипе танлаштарсан, 21 процент чухлĕ пĕчĕкленни палăрать. Грипп чирĕ 40 процент, хĕрлĕ шатра 11 хут чакни курăнать.

Муркаш районĕнче гепатитпа чирлесси 2005 çулта 8,0-тан (100 пин çын пуçне) 2006 çулта 5,4-не çити чакнă. 2005 çулта хĕрлĕ шатра чирĕпе 58 çын чирленĕ пулсан, 2006 çулта пĕр çын та чирлемен.

Çавăнпа та эпир пурте пире ăнланасса шанатпăр, çак ĕçре активлăрах пулма ыйтатпăр.

– Çĕнĕ çулта ку ĕç мĕнлерех пырать?

– Вакцинаци ĕçĕ малала пырать. В гепатит вирусĕпе сиенленесрен 18-35 çулхисене, енчен те вĕсем маларах чирлемен, прививка туман пулсан, 4261 çынна, гриппран 7580, хĕрлĕ шатраран 2335 ачана, 18 çултан пуçласа 25 çулченхи 840 хĕрарăма прививка тума палăртнă. Сире пурне те профилактикăпа сывату учрежденийĕсенче хапăл туса кĕтсе илетпĕр.

Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.

Йăла-йĕрке

Эх, Çăварни, Çăварни!

Кăрлач сиввисем шатăртатса иртсе кайсан, каçхи тÿпене çĕнĕ уйăх – нарăс уйăхĕ – шуса тухать. Çапла вара ял халăхĕ Аслă Çăварни кунĕсене кĕтет, яш-кĕрĕм, хĕр-упраç уява хатĕрленме тытăнать. Çăварни чупма юратакан çамрăксем çĕнĕ шупăрсем, илемлетнĕ саппун-аркăсем, сарă кĕрĕксем хатĕрлеççĕ. Çăварни эрнин малтанхи вырсарни кунне Аслă Çăварни тенĕ, ун хыççăнхи тунти кунпа ытлари куна та Аслă Çăварни шутне кĕртнĕ. Çăварни эрнин юлашки вырсарнине Кĕçĕн Çăварни тенĕ. Ун умĕнхи эрне кунпа шăмат куна та Кĕçĕн Çăварни тенĕ.

Çăварни кунĕнче ачасем кăвак çуталлах сывăрса тăрса çунашкисене туртса тăвайккине вĕçтернĕ. Кăнтăр çывхараспа кĕçĕн çынсем, çĕнĕ инкесем, кăмака хутса кăларса тăвайккине ачасемпе пĕрле ярăнма килнĕ. Кăнтăрла тĕлнелле çамрăксем те ярăнма тухнă. Çамрăксем ярăнса ывăнсан ватă кинемейсемпе мучисем пырса çитнĕ. Вĕсене çăварни карчăкĕсем тенĕ.

Çăварни кунĕ кашни хăй патне пыракан çынна – ачапăча-и, ватăраххи-и – алăкран ирттерсе пукан çине лартнă. Çуллă икерчĕ çитернĕ, сăра ĕçтернĕ, пуянраххисем эрех те сыптарнă. Çамрăксем лашасемпе ял-ял витĕр тухнă чухне çынсем пурте тенĕ пекех урама тухса тăрса катаччи чупакансем çине пăхса тăнă.

Яш-кĕрĕм яла çур çĕр иртсен çеç çаврăнса çитнĕ. Лашисене тăварса, шăнкăравсене илсе тепĕр Çăварниччен пуçтарса хунă. Çăварни савăнăçĕ çакăнпа вĕçленнĕ.

Çветтуй Валентин кунĕ

Асамлă туйăм уявне нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче паллă тăваççĕ. Пирĕн çĕршывра вара ăна 90-мĕш çулсенче çеç йышăннă. Çветтуй Валентин кунĕ теме хăнăхнă. Ăна паллă тăвасси пирки ытларах шкул ачисемпе студентсем, çамрăк çемьесем аса илеççĕ.

Валентин пирĕн эрăри III ĕмĕрте Рим империйĕн Терни хулинче пурăннă тесе палăртаççĕ. Пĕрисем вара ăна епископ, теприсем ахаль пачăшкă пулнă теççĕ. Вăл вăхăтри Рим императорĕ II Юлий Клавдий çар çыннисене мăшăрланма ирĕк паман. Çакă çар ĕçĕнчен пистерет тенĕ. Валентина император хушăвĕ шиклентермен. Юратакансене вара вăл вăрттăн венчете тăратнă. Çакăн пирки часах император та сиснĕ. Авалхи Римра саккунсене хисепленĕ, пăхăннă. 269 çулта ăна вĕлерме хушу кăларнă. Çак ĕçе нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче пурнăçланă. Валентин вилнĕ кун юрату Туррине Юнонăна халалланă уявпа пĕр кун килнĕ.

Тĕрмере вăл тĕрме пуçлăхĕн хĕрне Юльăна сыватать, курма пуçлать. Нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕнче вилес умĕн ун патне юрату çырăвĕ çырать. Çавăнпа çак кун чĕре евĕр юрату çырăвĕсем çÿретеççĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Паллă ентешĕмĕре асăнса

Тимофеев Федор Тимофеевич (Тимухха Хĕветĕрĕ) паллă чăваш чĕлхеçи, методисчĕ, шкул учебникĕсен авторĕ Муркаш районĕнчи Якаткасси ялĕнче 1887 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче çуралнă. Вăл Октябрь революцийĕ хыççăн тăван халăх культурине аталантарас ĕçе активлă хутшăннă паллă та сумлă çынсенчен пĕри.

Тимухха Хĕветĕрĕ Турайри шкултан вĕренсе тухсан Элĕкри икĕ класлă шкулта пĕлÿ пухать. Ун хыççăн вăл, учитель пулас шухăшлăскер, Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулне вĕренме кĕрет.

1913 çулта И.Я. Яковлев ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулне учитель тата тăлмач пулса ĕçлеме чĕнсе илет. Çав вăхăтра ăна К.В. Ивановпа, Н.В. Шупуççыннипе, Ф.П. Павловпа пĕрле ĕçлеме тÿр килнĕ. 1922-1925 çулсенче Тимухха Хĕветĕрĕ Чĕмпĕрти педагогика тата ял хуçалăх техникумĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентнĕ. 1925-1928 çулсенче Ленинградри Яфетически институтра аспирантурăра вĕреннĕ.

Ăна ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн педагогика тата ял хуçалăх институтĕнче чăваш чĕлхи вĕрентнĕ, çав вăхăтрах наука тĕпчев институчĕн сотрудникĕ пулнă, орфографие пунктуаци комиссийĕсенче вăй хунă. Чăваш шкулĕсем валли учебниксемпе программăсем çырнă.

1933-1937 çулсенче Ленинградри тухăç институчĕ çумĕнчи тăлмачăсен курсĕнче чăваш чĕлхи вĕрентсе пурăннă. Октябрь революцийĕ хыççăн çак унăн ĕçĕ анлă сарăлса каять. Т.М. Матвеевпа пĕрле 1-4, 5-7 классенче вĕренекенсем валли тăван чĕлхе вĕренме кĕнекесем çырса хатĕрленĕ.

Тимухха Хĕветĕрĕ чăваш ачисене вырăс чĕлхи вĕрентес ĕçе те йĕркелесе пынă, 1930 çулта “Материалы по преподаванию русской грамматики в нацменских школах” ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Çав çулах унăн чăваш чĕлхине пуçламăш класра вĕрентмелли методика кĕнеки пичетленсе тухать.

Шкул учебникĕсемсĕр пуçне Ф.Т. Тимофеев вĕренÿ программисене, чăваш чĕлхин орфографийĕпе пунктуаци правилисене хатĕрлес ĕçе активлă хутшăннă, тĕрлĕ литературăна вырăсларан чăвашла нумай куçарнă.

Мухтавлă ентешĕмĕрĕн ĕмĕрĕ вăрăм пулман: 1937 çулта ăна сăлтавсăрах арестлеççĕ, 1941 çулта вара унăн пурнăçĕ татăлать.

Н. ЕГОРОВА.

Çыру хурав кĕтет

Йĕрке тума май çук-ши?

Муркашра çав тери илемлĕ автовокзал пур пирĕн. Тавтапуç ăна туса панисене. Анчах та çав вокзалтан киле çитесси – яланах пысăк проблема. Эпир, Москакассине кăштах çывăхарах ялсене çÿрекенсем – 2-мĕш сортлисем çеç! Пире 7-10 тенкĕлĕх билетсем парасшăн мар. 5 сехет те 30 минут хыççăн тата автовокзалтан тухакан пысăк автобуссем çук (“Газель” текеннисем çеç). 13 çынран ытлашшисене (пире ĕнтĕ) билет памаççĕ, яланах тенĕ пекех касса умĕнче хирĕçсе илмелле пулать (килсене япăх кăмăлпа таврăнас килмест пирĕн кашни кунах).

Тархасшăн, пирĕн ыйтăва татса пама пулăшăр: 7-8 сехет (ирхине) тата 5.30 – 6.30 сехетсем хушшинче Муркаш – Москакасси маршрутпа “Газельсен” маршрутне усма çукши? Эпир Сире тав тунă пулăттăмăр.

Шанса юлакан пассажирсен ячĕпе Е.Ф. НИКИТИНА, ВОС секретарĕ.

Йыхравлатпăр

Çамрăксем, айккинче ан юлăр

Çамрăксенче патриотика туйăмĕсене çуратас, ветерансем тата аслă ăрури çынсене хисепре тытас, çамрăк армеецсемпе çарпа патриотика клубĕсем хушшинчи килĕшĕве сыхласа хăварас тĕлĕшпе февралĕн 15-мĕшĕнче Муркаш шкулĕнче 10 сехетре спартакиада иртет. Унта çамрăк армеецсемпе çарпа патриотика клубĕсенчи 7 çамрăкран тăракан командăсем хутшăнĕç (5 арçын ача тата 2 хĕр ача). Пĕрремĕш ушкăна вăтам çулхисем (8-мĕш класс – 14 çултисем тата унтан кĕçĕнреххисем), иккĕмĕш ушкăна аслă çулхисем (18 çултан аслă пулмалла мар) кĕреççĕ.

Спартакиадăра çÿлерех асăннă клубсен мультимеди презентацийĕн тата патриотика юррисен конкурсĕсене, хĕллехи нумай енлĕ “Марш-бросок” çар кĕрешĕвне ирттерме палăртнă. 1,2,3 вырăнсенчи командăсем дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçĕç.

Район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ.

Спорт

Пăшалтан тĕл пересси

Февралĕн 17-мĕшĕнче пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пересси организацисен, предприятисен, учреждениесен тата пĕтĕмĕшле пĕлÿ паркан шкулсен командисем хушшинче района мала тухассишĕн ăмăрту иртет. Вăл Муркаш шкулĕн тирĕнче пулать, 9 сехетре пуçланать.

Ăмăртăва предприятисемпе организацисен, учрежденисемпе пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ. Командăра 3 арçынпа 2 хĕрарăм пулмалла. Участниксем 3 хут тĕрĕслевлĕ, 5 хут зачет шучĕпе переççĕ. Дистанци – 25 метр.

Мала тухнă командăсене район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн дипломĕсене, çĕнтерÿçĕ-спортсменсене Хисеп грамотисем тата хаклă парнесем параççĕ.

Хамăр инф.

Пĕлтерÿсем. Объявления

16 февраля в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.

Продается мягкая мебель по низкой цене. Тел.: 8-927-851-37-86, 45-2-27 (домашний) Виталий или Володя.

Коллектив сотрудников Моргаушского районного отдела судебных приставов Управления Федеральной службы судебных приставов Российской Федерации по Чувашской Республике выражает соболезнование судебному приставу по ОУПДС Андрееву Николаю Васильевичу в связи с трагической смертью брата

АНДРЕЕВА Валерия Васильевича.

Ярапайкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта аслă бухгалтерта ĕçлекен С.С. Петрован тата поварта ĕçлекен В.С. Васильеван

АППĂШĔ

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри кирпĕч завочĕн коллективĕ çак заводра нумай çул хушши стропальщик пулса ĕçлекен В.В. Ершовăн аппăшĕ тата çак заводрах экскаваторщика пулăшаканĕ пулса ĕçлекен В.В. Артемьевăн амăшĕ

Юлия Васильевна НАЛИМОВА

вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Юратнă вĕрентекенсем

Кашни кун шкула эпир тулли кăмăлпа хавассăн чупатпăр. Пире унта юратнă учительсем кĕтсе илеççĕ. Москакасси шкулĕнче ачасене чунтан юратакан, хăйсен ĕçне парăннă учительсем ĕçлеççĕ. Çакна районти, республикăри конкурссенчи çĕнтерÿçĕсем те çирĕплетсе параççĕ.

Мана истори, географи, биологи, химии урокĕсем килĕшеççĕ. Урокĕсем кăна мар, вĕсене вĕрентекен учительсем те кăмăла каяççĕ. Географие чунтан парăннă Юлия Ивановна Григорьева, çамрăк биологсене “чутласа” кăларакан Раиса Васильевна Волкова...

Уйрăмах истори урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Эпĕ кăна мар, пирĕн шкулти нумай ача истори педметне вĕрентекен Валентина Николаевна Волковапа юратать пулĕ. Вăл ирттерекен уроксем яланах интереслĕ те тулли иртеççĕ. Темле темăпа та вăл ачасене тарăн пĕлÿ парать. Валентина Николаевна учитель кăна мар, пирĕншĕн вăл аслă юлташ та. Яланах пире кирлĕ канашсем, сĕнÿсем парса пулăшать. Сăнĕпе те, кăмăлĕпе те, чунĕпе те яланах илемлĕ те илĕртÿллĕ вăл.

Иртнĕ çул Валентина Николаевна ертсе пынипе пирĕн шкулти ачасем республикăра иртекен “Манăн çемье. Манăн çемье йăхĕ” конкурса хутшăнчĕç. Пирĕн шкултан виçĕ ача Павел Семенов ирттерекен елкăра пулса курчĕç. Вĕсем хушшинче эпĕ те пултăм. Вăл пулман пулсан, ку уявра савăнса та курас çук.

Çапла, пултарулла учительсем ĕçлеççĕ Москакасси шкулĕнче.

Ирина СИБЯКОВА.
Москакасси шкулĕ.

Ыр кăмăллăх

Паха парне

Çынна ырă туни каялла ырăпа таврăнать, теççĕ. Ăна ытарлă каланă пулин те, унăн пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Ахальтен мар ĕнтĕ пурнăç ырă çынсен лайăх ĕçĕсем çинче тытăнса тăрать, малалла аталанать.

Акă, çак кунсенче Муркашри тĕп библиотека фончĕ çĕре яхăн кĕнекепе пуянланчĕ. Район центрĕнче пурăнакан Анна Ананьевнăпа Юрий Петрович Черновсем хăйсен килти библиотекинчен чăваш тата вырăс çыравçисен чылай кĕнекине парнелерĕç. Вĕсем иккĕшĕ те вулама юратакан, анлă тавракурăмлă çынсем. Çавăнпах пулĕ вĕсен килĕнче пуян библиотека пухнă. Хăйсен библиотекинчен шеллемесĕр пире кĕнекесем парнеленĕшĕн Черновсене Муркашри тĕп библиотека коллективĕ ячĕпе чĕререн тав тăватпăр. Вĕсен ырă ĕçĕ ыттисемшĕн те ырă тĕслĕх пуласса шанатпăр. Пурне те библиотекăра хапăл туса йышăнатпăр.

Т. ПАВЛОВА, Муркашри тĕп библиотека ертÿçи.

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
“ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ”
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Заместитель гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3530.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 13.02.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.